*Ас тăвăм*

# ÇИТЕС ÉМÉРСЕН ПОЭЧÉ



**Раштавăн 23-мĕшĕнче Шупашкарти Çеçпĕл музейне чăваш поэзине кăмăллакансем пухăнчĕç. Çыравçăсемпе тавра пĕлӳçĕсем, вĕрентекенсемпе журналистсем Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 110 çул çитнине халалланă мероприятисене пĕтĕмлетсе хак пачĕç.**

Светлана Асамат Çеçпĕл çути нихçан та сӳнмессе палăртса çурта çутрĕ, ăна асăнса сĕтел çинчи çавра çăкăра ас тивме сĕнчĕ. Ун ячĕпе чиркӳрен çветтуй шыв та илсе килнĕ-мĕн.

Çеçпĕл фончĕн директорĕ Валерий Туркай Украинăра поэт ячĕпе хисепленнĕ шкулăн директорĕ Тамара Бондарь халăх умĕнче каçару ыйтнине, сывлăхĕ хавшанине пăхмасăрах митинга çитнĕ Станислав Репьях çыравçă чăвашсемпе украинсене туслă çыхăнăва упрама сĕннине хумханса аса илчĕ. Унччен Остерта 62 кун çумăр пулман иккен, Чăваш Енри хăнасем çитсен кунĕпе те çĕрĕпе лӳшкенĕ. Çеçпĕл тăван çĕрне таврăнас килнине çапла макăрса систернĕн туйăннă.

– Вăл чухăн çемьере çуралса ӳснĕ тенипе килĕшместĕп. Пиччĕшĕ Гурий Кузьмич килте 12 сурăх усранине, амăшĕ хытăрах пулнине каланăччĕ. Мишша ыттисенчен уйрăлса тăнине, унра Турă панă хăват пуррине чи малтанах ашшĕ туйса илнĕ. Сысна пăхнă чухне çывăрса кайнăшăн ывăлне хытă хĕненĕ пулин те ăна юратнă, вĕрентме тăрăшнă. Шăмă туберкулезĕ выртмара шăннипе пуçланнă теççĕ, кунта вĕрӳсуру сĕмĕ палăрать: чирлĕ ачан вырăнĕ çинче чăх урисем тупаççĕ. Юбилейре Çеçпĕлĕн хурăнташĕ Праски инке мана çапла каларĕ: “Ăна тĕлĕкре куртăм, йĕрет, питĕ йывăр-тăр. Украинăран илсех килесчĕ, кунтах пытарасчĕ”.

Валерий Туркай Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ премин лауреачĕсем çинчен çĕнĕ кĕнеке хатĕрлесе çитернине те пĕлтерчĕ. Кăçал ку премие Раççей Писательсен союзĕн членĕсем Аристарх Дмитриев куçарусăпа Тутарстан халăх поэчĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ренат Харисов тивĕçнĕ.

Çеçпĕлĕн пирвайхи юратăвĕ семинарире пĕрле вĕреннĕ Шура Читаева пулнă-мĕн. Чăваш хĕрĕ революци идейисемпе çуннă поэта малтанах сивленĕ, кайран хăех телеграмма янă. 10 çул аслăрах вырăс хĕрарăмне, ют арçын арăмне Анастасия Червяковăна çапла мĕскĕнленсе савма мĕн хистенĕ-ши сăвăçа? Çак юрату литературăна 99 шедевр парнеленипе паха пулнине, çырусенче философиллĕ тарăн шухăш пытаннине палăртрĕç музее пухăннисем.

Музей директорĕ Антонина Андреева кăçалхи викторинăна 600 ытла çын хутшăннине, поэтăн кĕнекисене туянас шутпа Мускаври хăна 2 хутчен Шупашкара килнине, кооператив университетĕнче иртнĕ сумлă уяв тĕлĕнтернине асăнчĕ. Юбилей тĕлне музей ĕçченĕсем Чăваш Енри тата Теччĕри Çеçпĕлпе çыхăннă вырăнсене сăнланă открыткăсен пуххи хатĕрлесе кăларнă. Ыйтакансен кăмăлне çĕнĕ кĕнекепе тивĕçтерме май килменни кашнинех пăшăрхантарать.

Мухтавлă ентешĕн “Пурнăçпа вилĕм” сăввипе кĕвĕленĕ юрра Лидия Сарине пĕрре илтсех асра хăварнă, ăна итлеме кăмăллă пулчĕ. Левтина Марье, Лидия Кузьмина ачасемпе пĕрле Çеçпĕл çинчен спектакль лартнине, амăшĕн рольне вылянине аса илчĕç. Ордем Гали, Нина Пăрчăкан, Зоя Сывлăмпи Çĕнĕ Кун вăрлăхне акса хăварнă кăвар чĕреллĕ чăвашăн хайлавĕсем поэзин асамлă тĕнчине туртнине палăртрĕç. Тăвăлта çуралнă Çеçпĕл пултарулăхне тишкернĕ “çавра сĕтеле” Татьяна Уразаева, Надежда Сельверстрова, Роза Михайлова та хутшăнчĕç.

– Унччен чăваш хăй кăвар чĕреллĕ пулнине е пĕлмен, е кăтартма хăраса шалта упранă. Çеçпĕл чăваш çĕр çине хăйĕн сассине пама килнине ĕнентерчĕ, сăвă çырма вĕрентрĕ. Вăл пусăм йĕрки кĕртсе хăварнăранах паян пирĕн поэзи ытти тĕрĕк чĕлхисен хушшинче янăравлăрах, кĕвĕллĕрех илтĕнет, – терĕ Марина Карягина.

Чăваш наци вăйне поэзи чĕлхипе шăратса кăларнă çын пирки паян тĕрлĕрен калаçакан пур. Çапах халăх такам хистенипе мар, Çеçпĕле чăннипех хисепленĕрен уяв мероприятийĕсене хавхаланса хутшăнать, ун сăввисене 6 çулти ача та, 60-тан иртнĕ кинемей те пăхмасăр вулать. Эппин, чĕрĕлĕвĕн чечекленекен хăватне витĕмлĕ кăтартма пултарнă поэт халăх чĕринчех упранĕ.

**Лина МĂКĂНЬ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

# ЫРÁ СÁНАРÉСЕМ ЛАЙÁХРАХ ПУЛМА ХИСТЕÇÇÉ

Паллă çыравçăпа Валентина Элпипе эпĕ кӳршĕллĕ пурăнатăп темелле: пирĕн çуртсем юнашарах вырнаçнă. Пĕрмаях куратпăм ăна, анчах сăмах чĕнсе калаçу пуçарма иметтĕм. Эпĕ ăна питĕ хисеплеттĕм. Ырă, асра юлакан сăнарсемшĕн тав тăваттăм. Хăш-пĕр чухне хамăн пурнăçри лару-тăрăва хайлавсенчи самантсемпе танлаштараттăм. Кĕнекисене вуланă май Валентина Андреевна пурнăçа лайăх пĕлни сисĕнетчĕ. Хăшпĕр сăнарĕнче хама палласа илнĕ пек те туйăнатчĕ. Пĕррехинче чăтаймарăм, чаплă хайлавĕсемшĕн тав тăвас шухăшпа çумнерех лартăм.

Юлашки çулсенче ăна урамра час-часах курма пулать. Килĕ умĕнче кайăксен юррипе киленсе ларать, ачасен вăййине сăнать. Никам та чăрмантарман самантсенче çамрăкрах чухнехи савăк кунсене аса илет-тĕр. Çав хутшăнуранпа маншăн çыравçă чăн юлташ та, чуна çывăх çын та. Халĕ эпĕ унăн сăмахĕсенесĕнĕвĕсене тĕпе хурса пурăнатăп. Ас тăватăр-и, пĕр кĕнекин ум сăмахĕнче çапла çырнăччĕ вăл: “...Мĕн тăвăн, пурăнан пурнăçра йăнăшасси ытла çывăх. Ӳксе хуçăлас марччĕ. Кирек мĕнле ларутăруран та ăнăçлă тухма чунри хавал, вăй-хăват пулăшĕ. Çынлăха нихăçан та çухатас марччĕ...” Çакна эпĕ, манса каяс мар тесе, хамăн блокнота çырсах хутăм.

Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ çырнă “Пулас кинсем”, “Качча кайсан” хайлавĕсем мана уйрăмах килĕшеççĕ. “Малтанхи савни” кĕнекине те кăсăкланса вуласа тухрăм. Сăнарсен хуйхи-суйхине пĕрле “пайларăм”. Шухăш-кăмăлне пĕлтĕм. Пĕрне вăрçас, теприне ырлас килчĕ.

Валентина Элпи çамрăксене юратăва упрама вĕренме йыхравлани шухăша ярать. Чăнах та çак сĕнĕве пăхăннă пулсан-и?.. Пурнăçăм, тен, урăхларах килсе тухĕччĕ.

Тĕнче усалланса пынă саманара чунлăрах пулма хистени вырăнлă, вăхăтлă “хушу”. Мĕн тери тĕрĕс çырать-çке Валентина Андреевна: “Пĕрне пулăшма, чун тĕревĕ пама тăрăшмалла... Юратура çав тĕрев, икĕ чуна пĕр ĕненӳ кӳрекен юратура...”

“Амантнă чун” калаври Наташа – /маншăн чуна çывăх çын/. Хĕр сăнарĕ хам студент чухнех шухăша янăччĕ. Юлашкинчен Арнольд хăйне юратнине ăнланса илнишĕн ăшăмра хам та хĕпĕртерĕм.

Ытти произведенири сăнарсем те – таса та тӳрĕ чунлă çамрăксем, вĕсем йывăрлăхсене парăнмаççĕ. Пире, вулакансене, ырăрах, чиперерех пулма вĕрентеççĕ. Кунта автор лайăх психолог пулнине палăртмасăр иртме çук.

Унăн хайлавĕсем чăн пурнăçран илнĕ тĕслĕхсем çинчен çырса кăтартнипе те кăмăла каяççĕ.

Вулакана ăнланмалла, ансат чĕлхепе çырнăран та кĕнекисене алран ярас килмест.

Валентина Элпин ырă тĕнчинче, лайăх çынсен хушшинче пулни чăннипе те кăмăла çĕклет, малашлăха çутă ĕмĕтсемпе кĕтме хавхалантарать.

**Елена НИКОЛАЕВА.**

*Шанас килет*

# ЯЧÉСЕМ ÉÇÉСЕНЧЕ УПРАНÉÇ

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсем. Шупашкарти Ленин проспектĕнчи 4-мĕш çуртра Писательсен союзĕн шавлă пухăвĕ иртрĕ. Ун чухне пире те, çамрăк çыравçăсен тусĕсене, унта кĕме ирĕк паратчĕç. Иван Шахтерăн хайлавне тишкерсе тулларĕç ку пухура. Çапах Николай Теветкел, Юрий Петров, Мария Волкова хӳтĕлесе-ырласа унăнне пичете сĕнчĕçех.

Эпĕ ун чухне милици сержанчĕ пулнă. Сых ятне-ши е эпĕ союзри çыравçăсемпе туслă пулнăран мана та Атăл хĕрринчи К.Иванов ураменчи пĕр кивĕ çурта пулас кĕнекене “çума” илсе çитерчĕç. Ю.Петров кравать айĕнчен çурăк саслă купăс туртса кăларса мана тыттарчĕ. Лешсем “шăмă кăшланă” вăхăтра эпĕ ăна аран-аран “çăварлăхларăм”. Ушкăнпа савăннă хыççăн такси тытсах Мария Волкова пурăнакан Иван Франко урамĕнчи путвала та çитрĕмĕр.

Эпĕ ку сăвăçа хам çара кайиччен ех паллаттăм. Ăна Атăл леш енчи санатори шкулĕнче курнăччĕ. В.Лукин баянпа юрлаттаратчĕ, М.Волкова та унтахчĕ.

90-мĕш çулсенче Вăрмар районĕнчи Карăкçырминче пулма тӳр килчĕ. Кĕçĕн ывăлăм çав ялти Люся Петровăн хĕрне качча илчĕ. Тăхлачсен хуралтисемпе çуммăнах ларакан çурт пушăччĕ – вăл М.Волковăн тăван килĕ иккен. Сăвăç хăтан тăванĕ пулнине пĕлсен çак çурт çине асăну хăми çакас пирки пуçлăхсем патне те çыртăм. Кунта Ыхраçырминчи Анатолий Тимофеев та пулкаланă иккен. “Ах, Толя амăшĕ инçеренех юрласа килни куç умĕнчех”, – аса илетчĕ тăхлачă.

Шупашкарти И.Франко урамĕнче те, Атăл леш енче сăвăçпа çыхăннă вырăнта та сăпайлă асăну хăми пулмалла пек те... Мария Волкова сăнарĕ унăн кĕнекисенче, сăвви-юрринче, “Карăкçырми сачĕсенче” ĕмĕрлĕхех упранĕ. Анатолий Ыхра ячĕ те тăван ялĕнчи урамĕнче курăнасса шанас килет.

**Анатолий МАКСИМОВ.**
Сĕнтĕрвăрри районĕ.

*Вулакан пултарулăхĕ*

***Светлана ПИЛЕШ***

### ЧĂВАШ ЯТНЕ МĂНУК ПАЯН ÇĔКЛЕТ

Чăваш чĕлхи юман пекех патвар,
Юман хăрать тесе те калас мар:
Тымарĕсем халь – пирĕн ачасем,
Сĕм вăрманта юман лартаç вĕсем.

Ялан пуплет тутар хăй чĕлхипе
Мăнаçланса хăй халăхĕпеле!
Эпир кая-им халĕ тутартан?
Атте-анне чĕлхи – пуянлăх ман!

Чăваш ятне мăнук паян çĕклет,
Вăл конкурса Шупашкара çӳрет.
Ăна, паллах, ыр чап ыран кĕтет,
Чăваш чĕлхи малтан-мала чĕнет.

Куславкка районĕ.

***Светлана БАРАНОВА***

### КАÇАР

Кантăкран-ши, сивĕ алăкран-ши
Сăрхăнатчĕ çĕмĕрт ывăçа...
Эс куçна теприн çине çĕклерĕн –
Алăкна уçса хупма пĕлмерĕм,
Ăнланманшăн, çыннăмçăм, каçар.

Аякра-ши эсĕ, çывăхра-ши,
Тунсăх мар-ши шухă хулара?
Сар уйра ыраш пиçсе çĕкленнĕ,
Çăкана татах чечек иленнĕ,
Кармашасшăн çӳллĕ кантăкран.

Алăкна тĕкнишĕн ӳкĕнместĕп,
Урăх йĕкĕт сан пекех хитре.
Чĕреме кăвак куçне пиллерĕ,
Çивĕте пучах хурса тĕрлерĕ,
Телейпе ачашлăх – ĕмĕре.

Аякра-ши эсĕ, çывăхра-ши
Ăнланманшăн, çыннăмçăм, каçар...
Елчĕк районĕ.